Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи майӑн 5-мӗшӗнченпе тухать

34 (7674) № ✻ Шӑмат кун, 2009 ҫулхи апрелӗн (ака) 25-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

«Вӗрентӳ» нацпроекта пурнӑҫа кӗртеҫҫӗ



## Тарӑн пӗлӳшӗн

***– Тарӑн пӗлӳсӗр ачасем умне тухма та килӗшӳллӗ мар, – терӗҫ компьютер умне ларнӑ хастар учительсем.***

***Альбина Юрьевна Герасимова (сӑн ӳкерчӗкре сулахайри) Ирина Михайловна Михайлова шкултан вӗрентсе кӑларнӑ пӗрремӗш класс хӗрӗ. Аслӑ пӗлӳ илсе тӑван яла таврӑннӑскер, вӑл паян хӑй вӗреннӗ шкулта ачасене информатика, технологи, экономика никӗсӗсене вӗрентет. Тӑрӑшуллӑ хӗрарӑм ӗҫри хастарлӑхшӑн Раҫҫей Федерацийӗн Вӗрентӳ министерствин Хисеп грамотине, 2005 ҫулта РФ Президенчӗн грантне, аслӑ категорие тивӗҫ пулнӑ.***

***Хӑйӗн вӗренекенӗн ӳсӗмӗсемпе кӑмӑллӑ Ирина Михайловна паян унран информатикӑпа слайдсем тума т. ыт. те вӗренет. Хӑй вара Турайри пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан вӑтам шкулта ачасене ют ҫӗршыв чӗлхисене вӗрентессипе 22 ҫул вӑй хурать. Ӗҫне лайӑх пӗлнӗрен 1-мӗш категориллӗ учитель вӑл.***

*А. БЕЛОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.*

Çур аки – 2009

## Нӳрӗк тытаҫҫӗ

Черетлӗ ҫур акиччен шутлӑ кунсем юлчӗҫ. Ӗнерхи куна вара «Волга» хуҫалӑх ҫеҫ вӑрлӑх имҫамлама пуҫланӑ (15 центнер). Ҫӗр улми суйлассипе тата яровизацие хурассипе вара нумайӑшӗ ӗҫе кӳлӗннӗ. Районӗпе 3868 тонна (82,5 процент) суйланӑ та ӗнтӗ.

Иртнӗ кунсенче малашлӑха пӑхса вӑй хунӑ Е. Андреев ячӗпе хисепленекен ял хуҫалӑх производство кооперативӗнче (85 гектар), Бархаткин (130 гектар) тата Толстов (47 гектар) хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсенче кӗрхи культурӑсене пӗтӗм лаптӑк ҫинче апатлантарма ӗлкӗрнӗ.

«Ударник» хуҫалӑхра нумай ҫул ӳсекен курӑксене 180 гектар апатлантарнӑ тата вӗсем ҫинче сӳрелесе нӳрӗк тытса хӑварнӑ. Нӳрӗк тытас ӗҫе «Восток» хуҫалӑхпа А. Мерлов хресчен (фермер) хуҫалӑхӗнче те пуҫӑннӑ.

**Хамӑр инф.**

Кам мӗнле ӗҫлет?

**РАЙОНТИ ПӖРЛЕШӲЛЛӖ ХУҪАЛӐХСЕНЧЕ АПРЕЛӖН 25-МӖШӖ ТӖЛНЕ ПӖР ӖНЕ ПУҪНЕ МӖН ЧУХЛӖ СӖТ СУНИНЕ КӐТАРТНИ (килогрампа)**

**Колонкӑсенче: 1. Кӑҫал сунӑ. 2. Пӗлтӗрхипе танлаштарсан («–» – сахалрах)**

| | 1 | 2 |
|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 12,0 | 2,3 |
| «Восток» | 9,7 | -1,5 |
| «Герой» | 13,4 | -1,9 |
| Ильич яч. хис. | 12,4 | -1,5 |
| Ленин яч. хис. | 6,2 | -1,8 |
| «Оринино» | 14,5 | 2,3 |
| «Передовик» | 13,7 | 5,0 |
| «Свобода» | 11,4 | 1,9 |
| «Сеятель» | 7,0 | 1,1 |
| Суворов яч. хис. | 16,0 | -0,3 |
| «Рассвет» | 3,3 | -0,7 |
| «Ударник» | 12,3 | -0,7 |
| Чапаев яч. хис. | 8,1 | -2,4 |
| Чкалов яч. хис. | 6,7 | -3,3 |
| «Хлебороб» | 2,1 | -2,1 |
| **РАЙОНӖПЕ** | **11,6** | **0,5** |

Ҫамрӑксен тата Ҫӗр ӗҫченӗн ҫулталӑкӗ

## Хамӑртан ытларах килет

Мӗн пӑшӑрхантарать-ха паян ҫамрӑксене? Ялта ӗҫлес, пурӑнас тесен мӗнле ыйтусене татса памалла? Ҫакӑн тавра калаҫрӗҫ те апрелӗн 21-мӗшӗнче иртнӗ республикӑри интернет-конференцире. Чӑваш Республикин вӗрентӳ тата ҫамрӑксен политикин министрӗ Г. Чернова, ял хуҫалӑх министрӗ М. Игнатьев тата ытти ертӳҫӗсем те ҫамрӑксене кӑсӑклантаракан ыйтусем ҫине тулли хуравсем пачӗҫ.

Патӑрьел, Елчӗк, Йӗпреҫ тата Муркаш районӗсенчи яш-кӗрӗме вара акӑ мӗн хумхантарать. Ялта ӗҫлесе тӗпленсе пурӑнма чи малтанах ҫурт-йӗр ҫавӑрас е туянас ыйтӑва татса памалла. Икккӗмӗшӗ – ӗҫ вырӑнӗ тата тивӗҫлӗ ӗҫ укҫи. Виҫҫӗмӗшӗ – ҫемьепе активлӑ канмалли вырӑнсем тата каҫсерен вӑхӑта усӑллӑ ирттерме майсем кирли.

Ялта пурӑнакан ҫамрӑк ҫемьесемпе специалистсен ҫурт-йӗрпе ҫыхӑннӑ ыйтӑвне татса парас тесе патшалӑх программисем аванах ӗҫлесе пынине М. Игнатьев тепӗр хут аса илтерчӗ. Ӑна Патӑрьелсемпе Елчӗксем те ҫирӗплетсе пачӗҫ.

Ҫамӑк специалистсене ӗҫ вырӑнӗсемпе тивӗҫтересси вара ытларах район пуҫлӑхӗсене тата хуҫалӑх ертӳҫисене канӑҫ памасть. Акӑ Патӑрьелӗнчи «Исток» предприятире ҫамрӑк специалистсем сахал мар. Мӗнле майпа илӗртме пултарнӑ-ха вӗсене предприяти ертӳҫи? Малтанах ӗнтӗ ялта пурнӑҫ условийӗсем лайӑхланса пыни те пулӑшу панӑ. Газ кӗртни, асфальт ҫулсем сарни, шыв пӑрӑхӗсем хуни. Патшалӑх та тӗрлӗ субсидисемпе пулӑшать. Анчах ертӳҫӗ студентсемпе – пулас специалистсемпе – хӑй пӗрре мар тӗл пулса калаҫасси ҫине ытларах вӑхӑт уйӑрнӑ. Кунашкал чухне вара ӗҫ укҫи пирки те, ӗҫри условисем пирки те лайӑхрах ӑнлантарма май пур. «Ӗҫлеме тытӑннӑ ҫамрӑк специалистсене ытларах шанмалла, вӗсем хӑйсен ответлӑхне туйса ӗҫлеччӗр, ӗҫ результатне курччӑр», – тет вӑл.

Конференцине хутшӑннӑ ҫамрӑксем нумайӑшӗ килти хушма хуҫалӑха аталантарма кредитсем илсе хӑйсен тупӑшне пысӑклатаҫҫӗ. Алӑ усса ларнипе паян, чӑнах та, малалла каяймӑн. Ҫамрӑксен хӑйсен пуҫаруллӑ пулмалла. Кану вӑхӑтне те усӑллӑ ирттересси хӑйсенченех килет. Ахальтен мар Г. Чернова ҫамрӑксене: «Пӗрле пухӑнмалла, интерессене пӗрле хӳтӗлемелле», – терӗ. Тӗрлӗ пулӑшупа усӑ курас тесен те активлӑ пулмалла, документсене хӑвӑрт пухмалла. Ӗҫре те ҫавӑн пек тӑрӑшмалла.

Пирӗн районта ҫамрӑк педагогсем – математика, физика, технологи тата ытти предметсемпе вӗрентекенсем – ҫитменни пирки те ыйту пулчӗ конференцире. Республикӑра кадрсен резервӗ пурри ҫинчен те калаҫрӗҫ унта. Кунашкаллисене вара районсенче те йӗркелемелле, ертӳҫӗсем, депутатсем хушшинче ҫамрӑксем те пулмалла.

Конференци хыҫҫӑнхи шухӑшсене ҫамрӑксемпе сӳтсе явма район пуҫлӑхӗ Ю. А. Иванов, унӑн ҫумӗ В.Г. Никитин, Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн депутачӗ В.Г. Данилов, вӗрентӳ пайӗн пуҫлӑхӗ З.Ю. Дипломатова хутшӑнчӗҫ. Юрий Александрович: «Нихӑш вӑхӑтра та, нихӑш ӗҫре те янтти пулман», – тенипе вара ҫамрӑксем пурте килӗшрӗҫ. Апла пулсан паянхи йывӑрлӑхсене пӑхмасӑр ҫамрӑксен активлӑ пулмалла. Ҫапла пулсан пулӑшакансем те тупӑнӗҫ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Ҫул-йӗр ҫинчи хӑрушсӑрлӑхшӑн

## Яланах йӗрке пултӑр

**Кӑҫалхи февраль уйӑхӗнчен тытӑнса районти патшалӑх ҫул-йӗр хӑрушсӑрлӑх инспекцийӗн патшалӑх тӗп инспекторӗ пулса милици майорӗ Владимир Ильич ВОЛКОВ ӗҫлеме пуҫларӗ. Ӑна районта ҫул-йӗр ҫинчи лару-тӑру ҫинчен, инспекцин малашнехи тӗллевӗсем пирки каласа пама редакцие чӗнтӗмӗр.**

***Кӗске справка:*** ***В.И. Волков Муркаш районӗнчи Ҫӗньял Оринин ялӗнче ҫуралса ӳснӗ. Шалти ӗҫсен пайӗн структуринче 1997 ҫултанпа. Малтанхи сакӑр ҫулне Шупашкар хулинчи Чапаевски поселокра участковӑй инспектор, хыҫҫӑнхи виҫӗ ҫулне Шупашкарти Московски районӗн шалти ӗҫсен пайӗнче участковӑйсен уйрӑмӗн ертӳҫи пулса тӑрӑшнӑ.***

**– Владимир Ильич, мӗнлерех лару-тӑру паян пирӗн районти ҫул-йӗрсем ҫинче? Аварисем ытларах камсен айӑпӗпе пулаҫҫӗ?**

– Кӑҫалхи ҫул, пӗлтӗрхипе танлаштарсан, лӑпкӑрах пуҫланчӗ темелле. Аварисен хисепӗ те, пӗрремӗш квартала илес пулсан, чакрӗ. Ҫак вӑхӑтра ҫулсем ҫинче пурӗ 7 (пӗлтӗр – 10) инкек пулнӑ. Вӗсенче 3 ҫын пурнӑҫӗ татӑлнӑ. Мускав – Хусан ҫул ҫинче 3 инкек пулчӗ, республика пӗлтерӗшлӗ ҫулсем ҫинче – 2, вырӑнти ҫулсем ҫинче – 2.



Аварисен сӑлтавӗсенчен пӗри - водительсем руль умне ӳсӗрле ларни. Ҫак тапхӑрта пурӗ 22 водителе асӑннӑ сӑлтава пула тытса чарнӑ. Тепӗр сӑлтав – пысӑк хӑвӑртлӑхпа ҫӳрени. Ҫак тапхӑрта пурӗ 177 водителе ирӗк панинчен пысӑкрах хӑвӑртлӑхпа ҫӳренӗшӗн административлӑ майпа асӑрхаттарнӑ. Ҫуран ҫӳрекенсем ятарлӑ вырӑнсенче ҫул урлӑ каҫманни те хӑйӗннех тӑвать. Ҫапах та нумайӑшӗ ҫул-йӗр хӑрушсӑрлӑх правилисене пӑхӑнмасть.

**– Эсир ӗҫлеме пуҫланӑранпа инспекцинче ҫӗнӗлӗхсем пулчӗҫ-и?**

– Ҫӗнӗлӗхсем темеллех те мар пулӗ вӗсене, пирӗн ӗҫре – пурнӑҫ ыйтакан пулӑмсем. Чи малтанах ӗҫре питӗ кирлӗ «алкотестер» туянтӑмӑр. Вӑл шӑпах тӗрӗс пӗтӗмлетӳсемпе тӗрӗс айӑплавсем тума май парать те. Иккӗмӗшӗ вӑл – водительсемпе (уйрӑмах руль умне ӳсӗрле лараканнисемпе) ҫуран ҫӳрекенсенчен йӗркене ҫирӗпрех пӑхӑнма ыйтма пуҫлани. Сӑмахран, пӗлтӗрхи ҫак вӑхӑтрипе танлаштарсан, пӗрремӗш кварталта ҫуран ҫӳрекенсем йӗркене пӑснӑ 26 тӗслӗх ытларах палӑртнӑ, пысӑк хӑвӑртлӑхпа ҫӳренӗ водительсене чарнӑ тӗслӗхсем те пӗлтӗрхинчен 45 ытларах.

**(Вӗҫӗ 5-мӗш стр.).**

Черетлӗ лару

## Паянхи кун ыйтӑвӗсемпе

Депутатсен районти Пухӑвӗн председателӗн 2009 ҫулхи апрелӗн 17-мӗшӗнчи 34 № йышӑнӑвӗпе депутатсен районти Пухӑвӗн черетлӗ 32-мӗш ларӑвне апрелӗн 24-мӗшӗнче район администрацийӗн ларусен залӗнче 10 сехетре пухасси пирки хаҫатра пӗлтернӗччӗ ӗнтӗ.

Унта ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсем, предприятисемпе учрежденисен тата организацисен ертӳҫисем, район администрацийӗн управленийӗсемпе пайӗсен пуҫлӑхӗсем, партисен представителӗсем те хутшӑнчӗҫ.

Ларура пӑхса тухма кун йӗркине кӗртнӗ ыйтусем шутӗнче район Уставӗпе, 2008 ҫулхи бюджета мӗнле пурнӑҫланипе, район бюджетне 2009 ҫулхи 1-мӗш кварталта мӗнле пурнӑҫланипе, депутатсен районти Пухӑвӗн унччченхи йышӑнӑвӗсене улшӑнусем кӗртессипе, преступноҫпа, пурлӑха Муркаш районӗн муниципаллӑ харпӑрлӑхӗнчен ял тӑрӑхӗсен харпӑрлӑхне парассипе, «Нива» ял хуҫалӑх производство кооперативӗн пурлӑхне Муркаш районӗн муниципаллӑ харпӑрлӑхне йышӑнассипе, районти Хисеп кӗнекин ҫӗнӗ положенине ҫирӗплетессипе, награда пама тӑратассипе ҫыхӑннӑ тата ытти ыйтусем.

Кун йӗркине кӗртмен ыйтусем те хӑйне хӑех ҫуралчӗҫ темелле. Вӗсен шутӗнче – халӑхран пухакан сӗтӗн 1 килограмӗн хакӗ 5 тенкӗ таранах чакса кайни. Юлашки ҫулсенче ял ҫыннисенчен ытларахӑшӗ килти хуҫалӑхра выльӑх тытса, продукци сутса майлашкаласа пурӑнма тӑрӑшать. Сӗт хакӗ чакса кайни вара – катастрофӑпа пӗрех. Ҫавна май ку ыйтупа депутатсем ЧР Патшалӑх Канашне ҫырупа тухма йышӑнчӗҫ.

**Хамӑр инф.**

Йыхрав

## Граждансене йышӑнать

**Апрелӗн 27-мӗшӗнче 13 – 14 сехетсенче граждансене РФ Патшалӑх Думин депутачӗ Николай Михайлович Бударин «Единая Россия» партин обществӑлла приемнӑйӗнче йышӑнать. Адресӗ: Муркаш ялӗ, Мир урамӗ, 9 ҫурт.**

Юбилей

## Саламлатпӑр



Шетмӗпуҫ ял тӑрӑхӗнчи Карманкасси ялӗнче пурӑнакан юратнӑ аннемӗре, ӑшӑ кӑмӑллӑ асаннене – **Луиза Ивановна АЛЕКСАНДРОВАНА** 60 ҫул тултарнӑ ятпа чӗререн тухакан ӑшӑ сӑмахсемпе саламлатпӑр. Юман пек ҫирӗп сывлӑхпа уй-хир пек пуян кӗрекепе татах та нумай ҫул телейпе пурӑнма сӗнетпӗр. Тавах сана эсӗ пурришӗн.

**Саламлаканӗсем: ывӑлӗпе кинӗ, хӗрӗсемпе кӗрӳшӗ, мӑнукӗсем тата тӑванӗсем.**